**Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!**

# ТУСЛĂХ

**НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ**
**ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА**

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N15 (4584) | *1998 çулхи февраль (нарăс) уйăхĕн 7-мĕшĕ, шăматкун* | *Палăртнă хакпа.*

## Район хыпарĕсем

### *Канашлу пулнă*

Нумаях пулмасть Якаелĕнчи вăтам шкулăн бази çинче районти шкулсен директорĕсен черетлĕ канашлăвĕ пулса иртнĕ. Ăна районти вĕрентÿ пайĕн заведующийĕ Н.Х.Абдуллин ертсе пынă. Кунта Ялавăрти тата Якаелĕнчи шкулсенче пулса иртнĕ пĕтĕмĕшле тĕрĕслев результачĕсемпе районти вĕрентÿ пайĕн инспекторĕ А.В.Губайдуллина тухса каланă. Канашлура çаплах вĕрентÿ учрежденийĕсен ĕçĕсемпе, уйрăммăн илсен, хăрушсăрлăх техникине тытса пырассипе, кадрсем хатĕрлессипе çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă.

Семинар-канашлăвăн практика пайĕнче кунта хутшăннисем Якаел шкулĕнчи пултаруллă учитель-методистсем Л.С.Ярмушкина, В.А.Питубаева хатĕрленĕ сăмах журналĕ - вырăс чĕлхин пĕрлештерне урокĕсенче пулса курнă, вĕсене пысăк хак панă.

### *Хумаеленче тепĕр магазин уçăлнă*

Юлашки вăхăтра "Игенче" хуçалăхри магазинсем çумне тата тепре хушăннă.

Çав утăма тума ассоциаци ертÿçисене "чĕрĕ укçапа" çыхăннă çивĕч ыйтусем хистенĕ. Хуçалăх ĕçченĕсем кунта ĕç укçи шучĕпе апатçимĕç, строительство материалĕсем, тумтир тата ытти япаласем туянма пултараççĕ.

*Кăçалхи çул Завдат Нигматуллинăн асĕнче юлĕ. Вăл 60 çул тултарать. Унăн пĕтĕм пурнăçĕ ĕçре иртнĕ. Нумай çул хушши вăл токарь пулса вăй хунă, юлашки вунă çул вара фермăри выльăхсене пăхнă, фураж турттарнă. Мĕнле ĕçе те Завдат пичче тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлать.*

*Ÿкерчĕкре: хресченсен хуçалăхĕсен "Элмет" ассоциациĕнчи А.Нигматуллин фуражир.*



## Ĕçе кăмăлпа пурнăçласан, вăл ăнса пырать

**Выльăхсене кăкармасăр усрасси çине куçарассин çĕнĕ технологине сарас тĕллĕшпе йĕркеленĕ семинарсенче администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин хуçалăх председателĕсене ялан çапла калать: "Ĕçе йĕркелессин çĕнĕ форми усăллăрах пулнине ĕçре хăвăр ĕненмесĕр, эпир темĕн чухлĕ каласан та нимĕн те пулмĕ. Çавăнпа специалистсемпе, ферма заведующийĕсемпе пĕрле пухăнăр та ятарласа вĕренме килĕр. Сакна асăрхаттарнине кĕтмесĕр тусан тата лайăхрах пулмалла, вара çĕннине сăмахшăн çеç мар сарма тăрăшнине хăвăрах курăр"**.

Тăрăшса ĕçлес тата çĕнĕ технологие пурнăçа кĕртес текен ертÿçĕсем Кикле, Хăмăшла кайса ĕç опытне вĕренме ÿркенсе тăман. Çав шутра РСУăн Козлов ячĕпе хисепленекен хушма хуçалăхĕн представителĕсем те. Тăрăшни сая кайман. Районти "Камиль-агро" фирмăн полномочиллĕ представителĕпе Н.Н.Ларионовпа пĕрле хуçалăхсенчи сĕт-çу фермисенче тунă улшăнусемпе тата сумалли залсене хатĕрлес тĕллĕшпе пурнăçлакан ĕçсемпе паллашса, çакна эпир хамăр курса ĕнентĕмĕр. Тĕкĕрмелĕнчи ĕçсем лайăх пынишĕн чун-чĕререн савăнтăмăр.

Механизаторсем те ĕçсĕр тăмаççĕ, пăрусен ушкăнне усранă витене икĕ-виçĕ кун хушшинче кăкармасăр усрама çĕнетнĕ. Красномайнск поселокĕнче те выльăхсен тепĕр витине юсаса çĕнетме пуçланă.

Ахальтен мар эпир Козлов ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн тĕслĕхĕ çинче чарăнса тăтăмăр. Хăш-пĕр вырăнсенче ĕçе хăйсем тĕллĕн тытăнма хăраса (тен, пултараймăпăр?) çынсене урăх çĕртен чĕнме е подряд организацийĕсенчен пулăшу ыйтма та хатĕр. Перекетлĕ-и çакă? Шантарсах калама пулать: çук.

Çавăнпа та хуçалăхра вăйсене пĕрлештерес тĕллĕшпе мерăсем йышăнмалла. Тĕслĕхрен, хресченсен хуçалăхĕсен "Комбайн" ассоциацийĕнче, нефтебазăн, сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕсенче техника та тупнă, çынсене те пухнă, хĕл варри пулнине пăхмасăрах, картасем тума, сумалли залсене оборудованилеме тытăннă. Юлашкине илсен, Н.Н.Ларионов кашни хуçалăхра пулса, сумалли зала ăçта вырнаçтарсан усăллăрах пуласси не вырăнти ертÿçĕсемпе калаçса татăлать, хатĕр проекта илсе килсе пĕтĕмпех кăтартса тата ăнлантарса парать. Ытти вара хуçалăхран хăйĕнчен килет. Хресченсен хуçалăхĕсен Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнчи çĕнĕ ĕне витипе, сăмахран, пачах урăх тĕллевсемшĕн усă кураççĕ. Сумалли пысăк зала хатĕрлеме кунта мĕнпур майсем пур иккен. Кăмăлпа пуçăнсан, ĕç те кал-кал пырать - кирлĕ мар читлĕхсене сÿтнĕ, алăк вырăнĕсене касса кăларнă, халĕ дояркăсен ĕç вырăнĕсене хатĕрлеме пуçланă.

"40 лет Победы" хуçалăхри Ильхам Хафизовăн кооперативĕнчи ĕç те çакăн пек шайра. "Çуткÿл", Кузнецов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче, "Агрохимсервис" акционер обществин хушма хуçалăхĕнче те витесене юсаса çĕнетессине хăюллă пуçăннă. Ĕçе кăмăлпа пурнăçласан вăл, яланах ăнса пырать. Сÿрĕккĕн, наянланса ĕçлесен вара лайăх пуçаруран та нимĕн те пулмасть. Кун çинчен вара урăх калаçу.

**Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.**

## Сесси администраци пуçлăхĕн отчетне итленĕ

Февралĕн 6-мĕшĕнче халăх депутачĕсен XXII суйлаври пĕрлештернĕ Нурлат Совечĕн черетлĕ вунултăмĕш сессийĕ пулчĕ. Унта пăхса тухма ĕç регламентне çирĕплетессине, яланхи комиссисем йĕркелессине тата суйлассине, президиум йĕркелессине тата суйлассине; халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Нурлат Совечĕ тата унăн президиумĕ 1998 çула палăртнă тĕп мероприятисен планне çирĕплетессине тивекен организациллĕ ыйтусем кĕртнĕччĕ.

Сессин кун йĕркин иккĕмĕш ыйтăвĕ тăрăх администраци пуçлăхĕ **Ф.С.СИБАГАТУЛЛИН** районăн 1997 çулхи экономикипе социаллă пурнăç аталанăвĕн итогĕсем тата 1998 çула палăртнă задачисем çинчен тунă отчета итленĕ. Сессие вырăнти самоуправленисен Совечĕсен председателĕсене, хулари предприятисемпе организацисен тата учреждениcен, хресченсемпе фермерсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсен ертÿçисене, район администрацийĕн пайĕсемпе управленийĕсен заведующийĕсене чĕннĕччĕ. Сесси ĕçне Тутарстан Республикин Премьер-министрĕн пĕрремĕш çумĕ **Р.Ф.МУРАТОВ** хутшăнчĕ тата сăмах тухса каларĕ.

Доклада сÿтсе явассине çак депутатсем хутшăнчĕç: "Нурлатри сахăр завочĕ" АО директорĕ **А.К.САВИНОВ**, райпо правленийĕн председателĕ **М.С.МУРАТОВ**, "Татнефть-Нурлатнефтешырав" ООО директорĕ **А.С.НАСОЛДИН**, "Росгосстрах - Татарстан" страховани фирмин районти филиалĕн начальникĕ **А.И.ГАЗИЗУЛЛИН.**

Район администрацийĕн пуçлăхĕн отчетне пĕрлештернĕ Совет йышăнчĕ.

Пăхса тухнă ыйтусем тăрăх сесси тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

**(Сесси ĕçĕ çинчен тĕплĕн çырнă отчета район хаçачĕн çитес çывăх номерĕсенче пичетлĕпĕр).**

## Сăмаха ĕçпе çирĕплетмелле

"Знамя Октября" колхозра ĕçсем йывăрлăхсемпе пыни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Çавăнпа та район ертÿçисем хуçалăхсем хушшинчи строительство организацине ăна хăйĕн хушма хуçалăхĕ пек илме сĕннĕ. Паллах ĕнтĕ, ку хуçалăх пурнăçĕнче палăрмасăр пултарайман, уйрăмах çĕнĕ объектсем тăвассинче. Тырă упрамалли склада, типĕтмелли агрегата, пилорама цехне тума тытăннă тата вĕçленĕ. Пĕр фермăра выльăхсене кăкармасăр усрама пуçланă, сумалли зал йĕркеленĕ. Хуçалăхăн çивĕч ыйтăвĕсене татса пама укçа-тенкĕ те пĕрле шыранă. Анчах та МСО, финанспа экономика енчен чылай йывăрлăхсем чăтса ирттерекенскер, çакăн пек пысăк хуçалăха ăнăçлă ĕçлеттерме пултараймасть (мĕншĕн тесен унăн хушма хуçалăхĕ виçĕ яла пĕрлештерсе тăрать). Çавăнпа та хуçалăха сыхласа хăвармалли пĕр меслет - пĕчĕк кооперативсем йĕркелесси çеç юлнă. Пурте пĕрле пуçтарăнса калаçнă хыççăн Берликпа Октябринăра - пĕрер, Ялавăрта икĕ кооператив йĕркеленĕ. Кооперативсен ертÿçисем хушшинче тĕрлĕ яваплă вырăнта ĕçленĕ специалистсем те, ахаль ĕçченсем те пур, пĕр кооператива вара маларах Ялавăрта агроном пулса вăй хунă, пĕлтĕр Куракъелĕнче кооператив йĕркелесе хăйне лайăх енчен çеç кăтартнă В.Н.Сайкина шанса панă.

Хальхи вăхăтра кооператив членĕсем пухусене хăйсем тĕллĕн ирттереççĕ. Кĕçнерникун Мазидулла Хамидуллин ертсе пыракан "Руслан" кооператив членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ, Хамидуллин малтан тĕп инженер пулса вăй хунă, юлашки вăхăтра хушма хуçалăх управляющийĕн тивĕçĕсене пурнăçлать. Пухăва халăх чылай пуçтарăннăччĕ, çакă çынсем хăйсен шăпишĕн тата хуçалăх малашлăхĕшĕн пăшăрханнине çирĕплетрĕ. Кунта вĕсене кăсăклантаракан ыйтусем çине хуравларĕç. Кооператив ертÿçи вĕсене Уставпа тĕплĕн паллаштарчĕ, çапла майпа, ăнланманни юлмарĕ пулĕ. Кооператив членĕсем те, çĕре тара панисем те чылай ыйтусем пачĕç, вĕсенче пĕр çын интересĕшĕн кăна мар, çаплах хуçалăх малашлăхĕшĕн, ĕçе лайăх йĕркелесе ярассишĕн тăрăшни палăрчĕ. Кооператив членĕсене техникăна юсас, акмалли материалсемпе тивĕçтерес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, çаплах тивĕçсене хăйсем хушшинче пайлас ыйтусем те пăшăрхантараççĕ.

Мĕн тесен те, ку пуху коопертив членĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçлеме, хăйсен çĕрĕн (ку 1220 гектар) хуçисем пулма хатĕррине, вĕсем татса памалли плансене тата кооператив ертÿçин шухăш-ĕмĕчĕсене ырланине кăтартрĕ. Вĕсем сăмаха ĕçпе çирĕплетессе шанатпăр. Ан тив, çапла пултăрччĕ.

**Р.МУЛЛИН.**

# "Çав çулсене пирĕн манмалла мар..."



***Февралĕн 8-мĕшĕнче Габбас Киямович Гиматдинов - Социализмла Ĕç Геройĕ, Нурлат районĕн Хисеплĕ гражданинĕ, Ленин, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, "Халăхсен туслăхĕ" орденĕсен кавалерĕ, чылай профессисен хисеплĕ титулĕсене, çав шутра "СССР Хисеплĕ нефтяникĕ" ята та тивĕç пулнăскер, 73 çул тултарнă пулĕччĕ. Габбас Киямович, питĕ ăслă-тăнлă пулнипе палăрса тăратчĕ, çынсемпе пĕр чĕлхе тупма, мĕнле ыйтăва та татса пама пултаратчĕ, хытă ыйтнипе килĕшсе тăракан пахалăх критерийĕсене хаклама пĕлетчĕ. Витĕмлĕ сăмахпа та, ĕçпе те пулăшнăшăн район çыннисем ăна халь те тав тăваççĕ. Тен, унăн тĕп пĕлтерĕшĕ çакăнтаччĕ те пулĕ: вăл яланах çĕннине шыратчĕ, пурнăçа кĕртме тăрăшатчĕ, ăна çынсен шăпи те пăшăрхантаратчĕ.***

***1997 çулхи январĕн 2-мĕшĕнче вăл ĕмĕрлĕхе куçне хупрĕ. Анчах унăн сăнарĕ халĕ те çынсен асĕнче-ха, ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Ĕç вара уншăн яланах тĕп вырăн йышăннă, Ф.С.Сибагатуллин çинчен вара кăмăлпах çапла калатчĕ: "Района аранах чăн-чăн хуçа килчĕ".***

***Габбас Киямович редакци коллективĕнче яланах кĕтнĕ хăначчĕ. Кирлĕ чух мухтама та сăмах хĕрхенместчĕ, кирлĕ пулсан - вăрçса та илетчĕ, тепĕр чух асаилĕвĕсемпе те паллаштаратчĕ...***

***Паян эпир асра юлнисенчен кăна мар, çаплах журналист блокнотĕнче сыхланнисенчен хăшпĕрне пичетлетпĕр. Çавăнпа та каласа пани - Габбас Киямович ятĕнчен.***

**АСĂНУ**

Эпĕ 1941 çул тĕлне Çарăмсан ялĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкула пĕтертĕм. Аттене фронта илсе кайрĕç. Çемьере аслă ача пулнипе мĕнпур йывăр ĕç ман çине тиенчĕ, манран кĕçĕнрехххисем тата улттăнччĕ. Эпир вара каллех тăван Туймет ялне таврăнма шутларăмăр, унта çăмăлрах пулĕ терĕмĕр. Эпĕ колхозра ĕçleme тытăнтăм. Эпир, арçын ачасем, маларах аслăрах арçынсем пурнăçланă ĕçсене турăмăр. Эпĕ тракторпа çӳреме ĕлкĕрейменрĕм çав. Пире шаннă чи кирлĕ ĕç вăл - Нурлатри элеватора тырă леçессиччĕ. Лашасене каçхине кӳлеттĕмĕр, кăнтăрла вара урăхиссемпе ĕçлеттĕмĕр, мĕншĕн тесен лашасем питĕ ывăнатчĕç. Çапла тырă тиесе çула тухаттăмăр, лав çинче ларса пынă чухне ыйхă пусатчĕ, анчах та çывăрма юрамастчĕ, мĕншĕн тесен хаклă тиев илсе каятпăр вĕт. Элеватора çитсен михĕсене те хамăрах пушататтăмăр, вĕсем вара 50-60-шар килограмлăччĕ.

Манăн салтак пурнăçĕ ăнăçлă пулчĕ. Тăшмана пĕтермелли мĕнпур майсемпе усă курма пĕлнине пăхмасăр, мана юлташсемпе пĕрле ăçта та пулин тăшман тылне ямарĕç: гварди бригадин составĕнче Кăнтăр Карелин Ленинград облаçне ирĕке кăларассишĕн çапăçусене хутшăнтăм. Эпир çапăçнă вырăнта вăрманлăх тата путлăхчĕ (пирĕн полкра Нурлатран Хавиль Рахимов тата Çарăмсан районĕнчи Лашманкăран Ибрагим Еремеев (халь вилнĕ ĕнтĕ -ред.) пурччĕ. Тĕпрен илсен, эпир Маннергейм линине хӳтĕлерĕмĕр. Кунта 1940 çулта пирĕн салтаксем нумай вилнĕ: финсем питĕ вăйлă çапăçатчĕç, уйрăмах вĕсен снайперĕсем чапа тухнă, урăхла вĕсене "куккуксем" тетчĕç. Пире вĕсене сăнаса тăрса пĕтерме тӳр килетчĕ.

Çапла пулчĕ, сывлăш десанчĕ черетлĕ çар задачисене пурнăçлама аннă чухне эпĕ ураран йывăр амантăм. Икĕ кун окопра выртрăм, çывăхри медицина чаçне илсе кайма май çукчĕ, мĕншĕн тесен эпир хамăрăннисенчен уйрăлнăччĕ, кайран пире пĕрлештерсен, мана икĕ медсанчасть урлă ирттерсе, Ладога урлă Котельничри госпитале çитерчĕç. Вăл вăхăт тĕлне ура пӳрленсе кайнăччĕ, температура пысăкчĕ, ура вара чăтма май çук ырататчĕ. Палатăра эпир, çамрăксем 3-4 кăначчĕ, ыттисем пурте аслăраххисемччĕ. Çамрăк хĕрсем пире ытларах тимлĕх уйăрнине ăнланмалла ĕнтĕ. Эпĕ вĕсенчен иккĕшне - Юльăпа Аньăна уйрăмах тав тăватăп. Акă мĕншĕн. Пĕррехинче, Юля санитарка ман койка патĕнчен иртсе кайнă чухне хуллен пăшăлтатрĕ:

- Гриша, санăн уруна касас теççĕ. Çакăн пек хыпар мана питĕ тĕлĕнтернипе пăшăрханса ыйтрăм:

- Эсĕ ăçтан пĕлетĕн? Кам ларĕ?

Вăл вара: - Мана, Аня медсестра каларĕ, вăл сана питĕ шеллет.

Чăнах та, лешĕ Юля пĕлтернине çирĕплетрĕ те хуллен çапла хушса хучĕ:

- Уруна касма объективлă кăтарту çук...

Каярах вара акă мĕн пĕлтĕм: пире сиплекен госпиталь заведующине чирлисем вырăн çинче нумай вăхăт хушши чĕрĕлейменсĕр выртнăшăн начальниксем вăрçнă пулнă, çавăнпа пире хăвăртрах кăларса ярас тесе манăн урана касма шутланă иккен. Хĕрачасем çавăн пек хыпар пĕлтернĕ хыççăн эпĕ çĕрĕпе куç хупмарăм, пуçран шухăш тухмарĕ...



Г.К.Гиматдинов çарти юлташĕсемпе. 1943 çулхи сăнӳкерчĕк.

Тепĕр кун, обход хыççăн госпитальти врача, манăн госпиталь начальникĕн политпай енĕпе ĕçлекен çумне васкавлă курмалла, кандидат карточки юн ăшне пулнипе пăсăлнă, ăна улăштармалла, терĕм. ВКП(б) членĕн кандидатне мана 1944 çулхи июнь уйăхĕнче йышăннăччĕ.

- Юрать, Гиматдинов, чĕнĕпĕр, - терĕ мана пирĕн палата врачĕ. Паллах, эпĕ госпитальти политрукпа тĕплĕн калаçма хатĕрлентĕм. Эпĕ ăна кандидат карточкине кăтартрăм та урана кастарма хирĕçленипе урăх госпитале куçарма рапорт патăм. Ыттисене сăмахпа каларăм. Çакăн хыççăн вара мĕнлерех шăвшав хускалчĕ! Госпитальшĕн ку ЧП. Пĕлместĕп, малалла мĕн пулнă пулĕччĕ, анчах та, ман телее, шăп кăна çав кунсенче пирĕн госпитале Кировран хирург килчĕ. Паллах, палатăсене кĕре-кĕре, чирлисем хăйсене мĕнле туйни çинчен ыйтрĕ. Ман пата та черет çитрĕ. Эпĕ çакăн пек меллĕ вăхăтпа усă курма шутларăм. Хамăн суран çинчен тĕплĕн каласа патăм. Вăл мана тимлĕн итлерĕ, урана пăхрĕ те чĕркенĕ бинта салатма хушрĕ, юлашкинчен çапла каларĕ:

- Хатĕрлĕр. Операци хам тăватăп. Çавăн чухне эпĕ хама мĕнле туйни çинчен калама кирлехши, 18-рти çамрăк каччăн пурăнмалла та пурăнмалла вĕт-ха, анчах та урасăр мĕнле?!

Эпĕ питĕ хумхантăм, шухăшларăм пулĕ çав, операци сĕтелĕ çине выртарсан мана наркоз пачĕç, анчах та вăл илмерĕ. 100 çити те шутларĕç, мана çаплах çывратаймаççĕ. Çакна курса, хирург хăйĕн пăтлă чăмăрĕпе çамкаран шаплаттарчĕ! Кайран вара эпĕ нимĕн те астумастăп.

Операци хыççăн тăна кĕре пуçласан, чи малтан эпĕ ура патне туртăнтăм: мĕн унпа? Чĕрĕ! Вырăнтах! Савăннипе эпĕ каллех ыйха путрăм.

Малалла сиплеnме мана киле ячĕç, анчах та эпĕ килте виçĕ уйăх кăна пултăм, мĕншĕн тесен, Çарăмсанти районсем хушшинчи колхоз шкулĕнче виçĕ уйăхлă курсра вĕренме телей пӳрчĕ, ăна пĕтерсен бухгалтер удостоверенине илтĕм, çавăн хыççăн вара каллех çара кайрăм. Вăрçă часах вĕçленчĕ те, мана 1945 çулхи декабрь уйăхĕнче суранланнипе çар ретĕнчен демобилизаци йĕркипе киле ячĕç. Çапла майпа эпĕ Аслă Отечественнăй вăрçăн II ушкăнри инваличĕ пулса тăтăм.

... Вăрçă пулман пулсан манăн пурнăç мĕнле çаврăнса тухнă пулĕччĕши, çакна эпĕ калама пултараймастăп. Тен, пачах урăхла. Анчах та ку пирĕн ăрушăн тупсăмне тупмалли юмах пекех юлать.

Анчах та çакă паллă: тăшмана çĕнтерсе, эпир, сывă юлнă фронтовиксем, киле таврăнтăмăр, хамăра тепĕр хут çуралнă пек туйса, мĕнпур чунчĕрепе çĕнĕ пурнăç патне талпăнтăмăр".

**Материала Д.ТЯМАЕВА хатĕрленĕ.**

**(Малалли пулать).**

# Çуралсан та, вилсен те ЗАГС кирлĕ

1997 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн "Гражданлăх шайĕн акчĕсем çинчен" йышăннă Законĕ "Российская газета" хаçатра пичетленнĕ хыççăн вăя кĕчĕ.

Çын пурнăçĕнче çавăн пек пулăмсем пурин те пулаççĕ. Вĕсенчен чи кирлисем - çурални тата вилни. Вĕсем хушшинче час-часах мар пулин те, пĕрлешнине регистрацилес, ача çуралнине çыртарас тĕлĕшпе, уйрăлнă, ача усрама илнĕ, хушамата улăштарнă тата ытти хăшпĕр ыйтусене татса панă чухне те йывăрлăхсем тухса тăраççĕ. Çапла майпа, халăхра "Çуралсан та, вилсен те ЗАГС кирлĕ" тени тĕрĕсех пулĕ çав.

Ку законра мĕн çĕнни пур-ха?

Пĕрремĕшĕнчен, ку закон тӳрĕрен ĕçлет. Вăл пурнăçа кĕнĕрен пе тĕрлĕ инструкцисем, ведомство докуменчĕсем кирлĕ мар.

Конституципе килĕшӳллĕн вăл граждансен прависемпе интересĕсене хӳтĕлет. Регистрацилемелли хутсен тата сведенисен шучĕ чакать.

Çемье йĕркелес текенсем валли ыра хыпар: халь Раççейри хăть хăш загсра та çырăнма пулать. Маларах ку процедура çамрăксем е вĕсен ашшĕ-амăшĕсем пурăнакан вырăнта кăна пурнăçлама май пулнă. Çапах та васкама сĕнместпĕр. Документсем çухалма е çутçанталăк инкекĕнче пачах пĕтме пултараççĕ, çакă вĕсене тупассине кăткăслатать. Эпир кивĕ законпах пĕрлешме сĕннĕ пулăттăмăр.

Çаплах хушаматсене, ятсене, ашшĕ ячĕсене улăштарассин йĕркине ансатлатнă. Халь çакна маларахри çулсенчи пек 16 çула çитнисен мар, кашни 14 çул тултарсан хăй тĕллĕн тума пултарать.

Çар çыннисем тата тĕрмере ларакансем вилнине регистрацилес йĕрке те улшăннă. Маларах ăна çар чаçĕсен командирĕсем, тĕрмесен администрацийĕсем пĕлтернине тĕпе хурса тунă. Халь - медицина заключенийĕ пулсан кăна.

Вилни çинчен калакан свидетельство формине те ансатлатнă. Моральпе этика шухăшлавĕпе халь вилнин сăлтавне палăртмаççĕ, ăна акт кĕнеки çине кăна çыраççĕ.

Тата тепĕр çĕнĕлĕх. Арлăха улăштарнине регистрацилеме медицина докуменчĕсем кăна тăратмалла.

**А.МАТРОСОВА,**
**ЗАГС пайĕн заведующийĕ.**

Хăна юррисем

## Тĕнче çине тухнă хĕвел пек

Алăкăртан кĕтĕм те мала пăхрăм,
Сĕтел тулли çимĕç, ай, куртăм.
Хам тăвансем патне килсессĕн
Пуç çĕклейми чыса эп куртăм.

Хуралтăвĕн аслă, ай, вăрманĕ,
Ту аяккисенче хырлăхĕ.
Пирĕн çак тăвансен, ай, пурлăхĕ,
Пире те тивет халь ырлăхĕ.

Эс те пулсан, тăванăм, эп те пулсан,
Тĕнче çине тухнă хĕвел пек.
Эсĕ кайсан, тăванăм, эпĕ юлсан,
Çулçăсăр ларакан йывăç пек

Кăвик кăвакарчăн карлăк çинче,
Унăн тĕкĕ картиш варринче.
Сирĕн патра, тăванăм, ĕçни-çини
Халь те малти шăлăм хушшинче.

Çуркунне пулсассăн манмăп-халĕ
Йăран çине мăкăнь акмашкăн.
Ĕмĕрĕм пулсассăн манмăп-халĕ
Сирĕн патра хăна пулнине.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.Илюшкина.**

** Пирĕн пата çыраççĕ*

## Тутар чĕлхин эрни иртрĕ

Нумаях пулмасть пирĕн шкулта тутар чĕлхипе литература эрни иртрĕ, ăна Гульфия Рафиковна Гайнуллинапа Гузель Исмагиловна Хамидуллина учительсем йĕркелерĕç. Эрнен программине маларахах пĕлтернĕччĕ, унта тĕрлĕ вăйăсемпе конкурссем кĕртнĕччĕ: "Тĕлĕнтермĕш хирĕ", "Телейлĕ самант", "Залида" тата ыттисем.

Ачасем пурте мероприятисене кăмăлпах хутшăнчĕç, вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе пĕлĕвĕсене кăтартма тăрăшрĕç, пирĕн шкулта вĕренекенсенчен чылайăшĕ чăваш ачисем вĕт.

Çапла эпир туслă пурăнатпăр тата ĕçлетпĕр, тăван тата патшалăхăн иккĕмĕш чĕлхине лайăхрах вĕренме тăрăшатпăр.

**Чулпан ГАЛИЕВА,**
**Алсу ШАЙДУЛЛИНА.**
**Салтакъелĕнчи вăтам шкул.**

## Прачечнăй кирлĕ

Районти халăха йăла енчен тивĕçтерекен производство управленийĕнче прачечнăй ĕçленĕ чухне пирĕн çемье кĕпе-йĕм çăвассипе нушаланмастчĕ. Ним каламалли те çук ĕнтĕ, питĕ лайăхчĕ. Халĕ вара, прачечнăя хупнă хыççăн, çак йывăр ĕçе пирĕн, ватăсен, хамăрăнах тумалла.

Управление çак цех пысăках тупăш паманнипе килĕшетĕп, çапах та халăха йăла енчен тивĕçтерекен предприяти çав цеха тепĕр хут уçсан аван пулмалла. Клиентсем те сахал мар пулĕччĕç.

**А.КУЗНЕЦОВ, пенсионер.**
**Нурлат хули.**

** Усăллă канаш*

## Асăрхасах тăмалла

Улма-çырла сачĕ сивĕрен хăрать. Хаяр сивĕсенче йывăççем пĕтме те пултараççĕ, уйрăмах сивве тӳсеймен улмуççи, груша сорчĕсем сиенленеççĕ. Йывăççене сивĕ тивесси вырăнти рельефран та килет. Айлăмлă, çĕр айĕнчи шыв сийĕ çӳллĕ, сывлăш дренажĕ çук вырăнта ӳсекен йывăççене сивĕ хăвăртрах тивет.

Çӳллĕрех вырăнти йывăççем сивве парăнсах каймаççĕ. Çапла вара сад чĕртнĕ чух пахчаçăсен улмуççисем лартас пулсан çак уйрăмлăхсене шута илсен аван.

Кăçалхи хĕлре çанталăк улшăнсах тăрать. Çавăнпа та йывăççем мĕнле хĕл каçнине асăрхасах тăмалла. Йывăç штамбĕсене юрпа хупласа пусăрăнтарсан аван. Хăш-пĕр пахчаçăсем йывăç турисене кĕркунне чĕркесе çыхма ĕлкĕреймен пулсан, хĕллехи вăхăтра та чĕркени пулăшать тесе шутлаççĕ. Ку енĕпе тĕрлĕ материалсемпе усă курма сĕнеççĕ.

Йывăççен çимĕç кӳмелли папкисене сивĕ тивнине папкасене урлăлла касса пăхса пĕлме пулать. Енчен те варринче хуралнă пулсан, вăл сивĕпе сиенленнĕ пулать.



Н.АЗИЗОВ сăнӳкерчĕкĕ.

# Пĕлтерӳсем

**Сывлăхăра çирĕплетес тетĕр пулсан**

**КАРАВАЕВ** бальзамĕ **"ВИТАОН"** (20 тенкĕ). Шăйăрттарнă, кастарнă ӳте, çыртнипе тата пиçнипе пулнă сурана сиплемелли хатĕр. Шыçтармасть, ыратнине лăплантарать, вируссем ермеççĕ. Тир чирĕсенчен, ачасем тарланинчен сипленĕ чухне питĕ эффективлă.

ОРЗ, бронхит, ларингит, гайморит, хĕрарăм чирĕсенчен: лактостаз, эррози, гемморой сипленĕ чухне усă кураççĕ. Çаплах шăл ыратнă, стоматит, парадонтоз вăхăтĕнче усăллă.

**КАРАВАЕВ** бальзамĕ **"АУРОН-ЛЮКС"** (45 тенкĕ) тата **"ФИТОАУРОН"** бальзам (30 тенкĕ). Пуç ыратнине тата çаврăннине, çыврас килнине ирттерсе ярать, пуç мими ĕçне лайăхлатать. Мигрень, гипертони чирĕсем тата инсульт вăхăтĕнче пулăшать. Çӳç тымарĕсене çирĕплетет тата ăна хăвăртрах ӳсме пулăшать, çӳç тăкăнма пăрахать, лĕкке пĕтерет.

**КАРАВАЕВ** бальзамĕ **"СОМАТОН-ЛЮКС"** (45 тенкĕ) тата **"ФИТОСОматон"** (30 тенкĕ). Ĕç пултарулăхне ӳстерет, ывăннине, стреса ирттерет. Организма шлакран тасатать, ытлашши виçене чакарать. Радикулит, артроз, остеохондроз чирĕсенчен сиплеççĕ тата çу сийĕ пуçтарăнсан, венăсем сарăлсан, суранлансан, шыçсан усă кураççĕ.

Урасем валли **"ОСТЕВИТОН"** крем-бальзам (25 тенкĕ). Мышцăсем ывăннинчен, шыçнинчен пулăшать. Сыпăсем ыратнине чакарать, ура тупанĕсем патне юн пыма пулăшать, çуркаланнине ӳт илтерет, тарлаттармасть.

**"ГЕОФОР"** крем-бальзам (25 тенкĕ). Тута шыççине (герпес) сиплет. Сурансене ӳт илтерме, шатрасене сиплеме усă кураççĕ, хурткăпшанкă çыртсан питĕ кирлĕ.

Сывлăх элексирĕ **"ФИТОХОЛ"** (25 тенкĕ). Пĕвер чирĕсенчен сиплет, вăй çуккине, ăш пăтраннине пĕтерет. Ыйха лайăхлатать.

**"ДИАБЕТИЧЕСКИЙ"** - эмел курăкĕсенчен тунă чей (15 тенкĕ). Юнри сахăра чакарать.

Сывлăх элексирĕ **"Встань-КА"** (25 тенкĕ). "Мухмăр" чирне, пуç ыратнине, тăртаннине, сӳрĕклĕхе сирет. Пĕверпе пӳресене сиенлĕ веществосенчен тасатать. Эрех ĕçме чарăнма пулăшать.

Çаплах магнитотерапи хатĕрĕсем: **магнитлă варинкке** (25 тенкĕ); **лор-клипсăсем** (20 тенкĕ); **магнитлă стелькăсем** (40 тенкĕ); **М-1** (ректаллĕ) (20 тенкĕ); **магнитлă сулă** ( 30 тенкĕ); **М-2** (вагиналлĕ) (20 тенкĕ). Эмелсем юраманнине палăртман, клиника тĕпчевĕсене иртнĕ. Таварсен пахалăх сертификачĕ пур.

*1996 çулхи июлĕн 6-мĕшĕнче Министерство панă 30-03/404 номерлĕ лицензи.*

**Суту-илӳ выставки февралĕн 12-мĕшĕнче районти тĕп больницăн поликлиникинче 11 сехетрен пуçласа 12 сехетчен пулать.**

* * *

**Çурт сутăнать, хаклă мар. Адрес: Гоголь урамĕ, 10.**

* * *

**Радомир Николаевич Перепелкин ячĕпе панă тракторист-машинист удостоверенине тĕрĕс мар тесе шутламалла.**

* * *

**Çемье хваттер тара илет. Адрес: Лермонтов урамĕ, 3, Расимран ыйтмалла.**

* * *

**Çĕнĕ ВАЗ-2106 сутатпăр е хушса тӳлесе çĕнĕ ВАЗ-21213 автомашинăпа улăштаратпăр. Телефон: 2-28-10.**

## Акцисем туянатпăр:

**- Татнефть (привилегиллĕ, "Б" категориллĕ);**
**- "Сбербанк РФ";**
**- РАО "Газпром"**
**Телефон: 2-26-43.**
**Лицензи номерĕ 40-000-1-00083, Мускав хулинчи хаклă хутсен рынокĕ тĕлĕшпе ĕçлекен Федераллĕ комисси панă.**

**Мăйракаллă шултра выльăх тирĕсене килĕрсенчех йышăнатпăр. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Телефон: 5-26-10. Свидетельство номерĕ 685.**

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информацие пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 863.